

# 2021 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе тĕрĕслев ĕçĕ çырма хатĕрлесси

*Егорова А.С., Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн этнокультура вĕренĕвĕн кафедрин доценчĕ*

# Тĕрĕслев ĕçĕн тытăмĕ

Тĕрĕслевпе хаклав материалĕ 8 ĕçе пĕрлештерекен 2 пайран тăрать.

**1-мĕш пайра** – вуланă текстăн тĕп шухăшне туллин çырса памалла.

**2-мĕш пай** 7 ĕçрен (2-8) тăрать. Ку пайра сăмах, предложени, текст тишкермелли ĕçсене тумалла.

1-8-мĕш ĕçсен хуравĕсене текстра ятарласа палăртса хăварнă вырăна çырмалла.

# Текста вуласа тухăр та ĕçсене тăвăр

(1)Укахви йăрă та чĕрĕ, хаваслă та калаçма, шӳт тума юрататакан хĕр ачаччĕ. (2) Вăрçă пуçланнăранпа пачах улшăнчĕ. (3)Хăш-пĕр вăй питти арçын та хуçăлса ӳкмелли ĕçсене тунă хыççăн – улшăнса кайрĕ. (4) Кăмăлĕпе пусăрăнчĕ, сăнне-питне ĕшенчĕк сĕм çапрĕ, янкăс сасси салху çемме куçрĕ. (5) Çакна Укахви хăй те сисет. (6) Вăхăчĕ çапла килчĕ пулсан мĕн тăвас-ха?

(7) Виçĕ эрне кăна-ха Укахви, Ольга, Хĕветли Етĕрне тăрăхĕнчен окоп чавса таврăнни. (8) Мĕн-мĕн курман пулĕ вĕсем темиçе уйăх хушшинче, мĕн-мĕн тӳсмен? (9) Шартлама сивĕре чул пек шăннă çĕре лумсемпе ватса чавнă, сивĕ бараксенче çĕр каçнă. (10) Çаксене сарăмсăрах аса илсен хĕр çӳçенсе илчĕ, шухăша урăх енне пăрма тăрăшрĕ. (11) Мĕн-мĕн курса тӳсмерĕ ĕнтĕ халăхĕ?

(12) Никама та çăмăл мар: вăрçăрисене те, ялтисене те. *(Юрий Скворцов*.)*

***Юрий Скворцов** (1932–1977) – чăвашсен паллă çыравçи.*

# 1-мĕш пай

**1. Текста тимлĕ вулăр те унăн тĕп шухăшне çырăр.**
**Хуравĕ:**

# 2-мĕш пай

**2-8-мĕш ĕçсен хуравĕ сăмах (темиçе сăмах) е цифра (цифрăсен йĕрки) пулма пултарать.**

Кашни ыйту хыççăн 5-шер вариант хурав панă. Вĕсенчен тĕрĕсси пĕрре е темиçе пулма пултарать. Тĕрĕс мар хурав çырсан ăна туртмалла та унпа юнашар çĕннине çырмалла.

## 2 Текст содержанийĕн тишкерĕвĕ

***Текст содержанийĕпе хăш предложенисем тӳр килеççĕ?***

1) *Укахви шӳт тума юратакан хĕр ачаччĕ.*
2) *Укахви, Ольга, Хĕветура Етĕрне тăрăхĕнчен окоп чавса таврăннă.*
3) *Шартлама сивĕре тимĕр кăмака хутакан бараксенче çĕр каçнă.*
4) *Çичĕ уйăх хушшинче хĕрсем тем те тӳснĕ.*
5) *Вăрçăрисене те, ялтисене те çăмăл мар.*

***Хуравĕ:*** ______________________________

## 3 Илемлĕх мелĕсене тишкерни

***Танлаштаруллă предложени номерне кăтартăр.***

*(1) Шартлама сивĕ çанталăк тăрать.*

*(2) Вăрçă пуçланнăранпа пачах улшăнчĕ.*

*(3) Кăмăлĕпе пусăрăнчĕ, сăнне-питне ĕшенчĕк сĕм çапрĕ, янкăс сасси салху çемме куçрĕ.*

*(4) Мĕн-мĕн курман пулĕ вĕсем темиçе уйăх хушшинче, мĕн-мĕн тӳсмен?*

*(5) Шартлама сивĕре чул пек шăннă çĕре лумсемпе ватса чавнă, сивĕ бараксенче çĕр каçнă.*

***Хуравĕ:*** ______________________________

| 4 | | Лексика тишкерӗвӗ |
|---|---|---|

***4. Хаваслă** сăмахăн (1-мӗш предложени) антонимне текстра тупса çырăр.*

***Хуравӗ:*** ____________________________

## 5 Синтаксис тишкерĕвĕ

**Предложенисен грамматика никĕсне тĕрĕс палăртнă варианта кăтартăр.**

*1) Укахви хĕрачаччĕ* (1-мĕш предложени);

*2) вăй улшăнса кайрĕ* (3-мĕш предложени);

*3) кăмăлĕпе пусăрăнчĕ* (4-мĕш предложени);

*4) Çакна сисет* (5-мĕш предложени);

*5) мĕн-мĕн тӳсмерĕ* (11-мĕш предложени).

***Хуравĕ:*** ______________________________

## 6 Пунктуаци тишкерӗвӗ

**Чарӑну палли лартмалли вырӑнсене кӑтартакан цифрӑсене ҫырӑр.**

*Шкулӗнче те вӗренӳ тикӗс пыман (1) пӗтӗм шкулӗпех (2) пӗр-пӗр колхоза кайса (3) е тырӑ вырнӑ (4) е ҫӗр улми кӑларнӑ (5) е авӑн ҫапнӑ.*

***Хуравӗ:*** ____________________________

| 7 | | Синтаксис тишкерĕвĕ |
|---|---|---|

***Чул пек шăннă çĕре лумсемпе ватса чав*** **сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне çырăр.**

***Хуравĕ:*** ______________________________

## 8 Орфографи тишкерĕвĕ

**Паллă тунă сăмахсене мĕнле çырнине тĕрĕс ăнлантарнă хурав варианчĕсен номерĕсене çырăр.**

*1)* ***куççульпе*** *– сăмах вĕçĕнчи çемçелĕх паллине хупă сасăпа пуçланакан пур аффикс умĕнче те çырмалла;*

*2)* ***мĕн-мĕн –*** *мăшăр сăмахсене дефиспа çырмалла;*

*3)* ***Мишеркасси*** *– пайăр ятсен çыхăнăвĕнчен пулнă ял ячĕсене пĕрле çырмалла;*

*4)* ***тивĕçлĕх*** *–* ***-****лăх/-лĕх аффикссенче яланах пĕр л çырмалла;*

*5)* ***сип-сивĕ*** *– пĕр тан ăнлава палăртакан сăмахсен пĕрлешĕвне дефиспа çырмалла.*

***Хуравĕ:*** ____________________________

# Хуравсем

| Ěç номерě | Тěрěс хурав |
|---|---|
| 2 | 15<e>51 |
| 3 | 5 |
| 4 | салху |
| 5 | 145<e>çак цифрăсен кирек мěнле йěрки |
| 6 | лумсемпе ватса чав |
| 7 | 14<e>41 |
| | |



# Тĕрĕслев ĕçне хакласси

Туллин хуравламалли **1-мĕш** ĕçе тусан шкул ачи **0-5** балл илме пултарать. Текстăн тĕп шухăшне тулли те уçăмлă уçса парсан чи нумай 5 балл илме пулать, анчах орфографи, пунктуаци, грамматика тата пуплев йăнăшĕсем тĕл пулаççĕ пулсан 1 балл чакармалла.

Кĕскен хуравламалли **2-8-мĕш** ĕçсене тĕрĕс тусан кашни ĕçшĕн **1-ер** балл илет.

Хурав **тĕрĕс пулмасан** е **вăл пачах пулмасан – 0** балл лартаççĕ.

**1-8-мĕш ĕçсене тĕрĕс тусан пĕтĕмпе 12 балл пухма май пур.**

# Балсене палла (оценкăна) куçармалли виçе

| Баллсем | Паллă |
|---|---|
| 0-5 | «2» |
| 6-7 | «3» |
| 8-9 | «4» |
| 10-12 | «5» |

## Вăхăтпа пĕлсе усă курăр!

Тĕрĕслев ĕçне тума **45** минут уйăраççĕ. Çак вăхăтра текста тимлĕ вуласа тухмалла, пĕрремĕш ыйтăва туллин тата тест ыйтăвĕсене хуравламалла.



# Тĕрĕслев ĕçĕнче ăнăçу сунатпăр!